# УХСАЙ САНАРĔ

Куç умĕнче Ухсай сăнарĕ:
Ача кулли сăн-питĕнче.
Сăввисенче вут-хĕм кăларĕ
Кĕтмен-туман самантсенче.

Силпи-Слакпусăн эп çӳрерĕм
Ухсайпала чăн тăванла.
Калаçрăм —
Тăрана пĕлмерĕм:
Уçса ярать вăл кăмăла.

Слакпус çăлкуçĕнчен шыв ĕçрĕ,
Питне те çурĕ тăрăшса.
Чун-чĕрипе Сетнер пек вĕçрĕ,
Шыв ăсакан хĕре курсан.

Силпи çаранĕнче кансаччĕ:
Ем-ешĕл курăкĕ — кашма.
«Кунта, эх, Кĕстенттин пулсанччĕ...» —
Тек пĕр сăмах та шарламасть.

Хĕвел те аслă çутçанталăк
Пĕрлешнĕ пулĕ халь унпа?
Лутра çынра тăван çĕр халĕ, —
Куратăп, — иксĕлми тапать.

Трагеди, сăвă, романсем те
Ахаль-и ӳкнĕ хут çине?
Тавралăх сăваçа:
«Илсем, — тет, —
Ман мĕскер пур, чĕрӳ варне...»

Ваттипеле — вăл чăн-чăн ватă,
Ачапала — чăн ачалла.
Кун-çул иртет,
Кун-çул шăвать, ав,
Асилӳпе шав малалла.

Мĕскер тăвайăн? Вăхăт шелсĕр,
Ухсай хупать таса куçне.
Выртать халь лăпкăн,
Ним пĕлмесĕр
Çĕршывăмри нушасене.

Халăх нушишĕн, чун нушишĕн
Ĕçетчĕ-тĕр хăш-пĕр чухне?
Пурăнăçпа малаш пурришĕн
Тытатчĕ çирĕппĕн хăйне.

Çын чĕрĕ чух эпир мĕн-ма-ши
Этем чунне курасшăн мар?
Вак-тĕвексемшĕн е ним маршăн
Кун-каçăн хатĕр ятлаçма.

Халь —
Çулсем урлă эп пăхатăп:
Ухсай тăрать таса, хитре.
Вăл вăрмана кĕрет, куратăп,
Тухать тырпуллă уй-хире:
«Саватăп эп, хирсем, сире...»
Тирпейлĕ сăввине вулатăп.

Якку Ухсай!
Утатăн чĕррĕн
Халăхпала куллен-кунах.
Çĕн ĕмĕре хастаррăн кĕрĕн,
Мĕншĕн тесен чăвашăн çĕрĕ
Чунпа упрать ялан сана.

**Георгий ЕФИМОВ,**
**Чăваш халăх поэчĕ**



*Сăнӳкерчĕкре: параççĕ: К. Чулкаç, Ш. Муддарис (тутар поэчĕ), К. Турхан, Е. Евстафьев; тăраççĕ: Я. Ухсай, М. Романов, Г. Ефимов, Митта Ваçлейĕ.*

# УХСАЙ ТĔНЧИ

*Улăп сухаçă пек курăнса тăрать вăл пирĕн чăваш литературинче. Пирĕн çĕнĕ культурăн вичĕ сийне — Пушкăрт, Чĕмпĕр тата хамăрăн тĕп Чăваш çĕрĕн асамлă сийĕсене пĕр культурăна пуçтаракан чаплă сухаçă. Умĕнхи литературăра вăл, паллах, Константин Иванова пуç çапнă. Иван Яковлевич Яковлев уншăн — чăваш çулпуçĕ, тĕнче сăпки — Чăваш çĕрĕ.*

*Ухсай тĕнчи — Çĕр-анне мĕр чĕлхи, «тăпра поэчĕ», тетпĕр ăна çавăншăнах. Тĕп сăнарĕ — Çĕр ăсчахĕ — Кĕлпук мучи. Поэзире — хутран касса тетте çуртсем лартмасть Ухсай, кăмака хутса, çăкăр пĕçерсе, выльăх-чĕрлĕх усраса пурăнакан çынсен хĕвел айĕнчи пура поэми-романĕсем вăл çырнисем, Чăваш çĕрĕ çинчен Ухсай ухсайла каласа панисем.*

*Сергей Кадикин чулçă Ухсай палăкне чукласа чун кĕртет. Кăçалхи чӳк уйăхĕнче ку палăка, поэт çуралнăранпа 85 çул çитнĕ тĕле, унăн тăван ялне Пушкăртри Слакпуç ялне лартмалла. С. Кадикин çĕр ĕçĕпе ĕçлесе пурăнакан чăваш валли хавхаланса тупнă сăнар: гранит чул ăшĕнчен, тăпра вăйне сирсе, поэт-шухăшлавçă капмар-çамкаллă Ухсай-Сократ хăпарать. Чăваш. Çăлтăр ачи.*

**Хветĕр АГИВЕР**